Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

42 (7573) № * Юн кун, 2008 çулхи июнĕн (çĕртме) 4-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

**Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен районти конкурсĕнчен**

## Çĕннине алла илсе ӳсĕмлĕ ĕçлемелле



«Ăмăрту условийĕсем кашниншĕнех паллă, анчах кам çĕнтерĕ-ши?» – теççĕ «Оринино» хуçалăхăн техник-осеменаторĕ Вера Ершова тата «Восток» ял хуçалăх производство кооперативĕн техник-осеменаторĕ Татьяна Семенова.

– Ĕлĕкрех «вĕренмелле, вĕренмелле, вĕренмелле» тенине эпир паян «ĕçлемелле, ĕçлемелле, ĕçлемелле» сăмахсемпе пуянлататпăр. Паян пирĕн хуçалăхăн, районăн уяв. Республика Президенчĕ Н. Федоров калашле, уявăн усси пулмалла, мĕншĕн тесен кунта районăн, Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн экономикине малалла уттаракан ĕçченсем пухăннă, – терĕ конкурс пĕтĕмлетĕвĕнче «Свобода» ăратлă выльăх завочĕн председателĕ К. Е. Сретинский.

Çакна никам та хирĕçлемерĕ, хирĕçлеймĕ те. Юлашки çулсенче Раççей Федерацийĕн Президенчĕ палăртнă «Агропромышленноç комплексне аталантарасси» приоритетлă наци проекчĕ ял хуçалăх предприятийĕсене, ялта пурăнакансене çĕнĕ аталану çулне уçса ĕçлеме вăй панине, хăйсем ку таранччен пурнăçланă ĕçсем çине вĕсене çĕнĕлле пăхма хистенине, кашнин умнех çĕнĕ тĕллевсем лартса çакна валли çĕнĕ ĕç мелĕсем алла илме, производствăна çĕнĕ технологисем кĕртме хавхалантарнине пурсăмăр та курса тăратпăр. Мĕн тетĕр эсир? Пăр тапранчĕ, çанă тавăрса ĕçе кӳлĕннисен продуктивлăхĕ ӳсрĕ. Анчах кун йĕркинче темĕнле проект-программа пулсан та, конкретлă ĕçлекен ăсталăхĕ малти вырăнта тăрать. Вăл çапла пулнă, пур, пулĕ те.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).

**Республика кунне районта уявличчен 20 кун юлчĕ**

## Агропромышленноç комплексĕн ĕçĕпе паллашать




*Ĕнер пирĕн республикăна Раççей Правительствин Председателĕн пĕрремĕш çумĕ В.А. Зубков ĕçлĕ визитпа килсе çитрĕ. Вăл «Приволжское» предприятири сĕтçу фермине, потребительсен «Нур» кооперативне, «Чебоксарский» сĕт комбинатне тата ытти ял хуçалăх предприятийĕсене çитсе курать.*

*Виктор Зубков сĕт туса илессине ӳстерес, ял хуçалăх кооперативĕсене тата кооперативлă суту-илĕве аталантарас ыйтусемпе канашлу ирттерет.*

*Сăн ӳкерчĕкре: В.А. Зубкова ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров тата Чăваш Республикипе ĕçлекен тĕп федераллă инспекторĕ Р.К. Тихонов аэропортра кĕтсе илнĕ самант.*

**Раççейре**

## *Августран пенси ӳсет*

РФ Правительствин пуçлăхĕ В.В. Путин çынсен пурнăçне çăмăллатассипе Патшалăх Думине сĕнӳсем тăратма кирлине палăртнă. Çакна вăл суйлавсем умĕн граждансене вĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма шантарнипе ăнлантарнă.

Ачасем ӳстерекен граждансенне тупăшран уйăхсерен тытакан налука кашни ачашăн 600 тенкĕрен мар, 800 тенкĕрен çеç илме кирлине палăртнă.

55 пин ытла ветерана 2010 çулхи майăн 1-мĕшĕччен çуртйĕр условийĕсене татса пама пулăшмалла. 2008 çулта 33 пин ветерана автотранспортпа тивĕçтермелле е укçан компенсаци тӳлемелле.

Путин августăн 1-мĕшĕнчен пенсисене ӳстерме кирлине палăртнă. Пенсин тĕп пайĕ 15 процент хăпармалла. Пенсин страхлакан пайне те ӳстерме палăртаççĕ. Вăл 8 процент чухлĕ пысăкланмалла. Çапла пенси пĕтĕмĕшле вăтамран 448 тенкĕ ӳсмелле.

Çавăн пекех июлĕн 1-мĕшĕнчен çынсене пĕр хутчен паракан тӳлевсен виçисем те хăпармалла. Çав шутран амăшĕн укçине те малтан палăртнă пек 8,5 процент мар, 10,5 процент индексацилеççĕ.

## Апат-çимĕç пирки

РФ Тĕп санитари врачĕ Геннадий Онищенко «Гигиенические требования безопасности и пищевой ценности пищевых продуктов» йышăну çине алă пуснă.

Сăмах кунта сутлăха кăларакан апат-çимĕç тата унăн пахалăхĕ пирки пырать. Малашне ку ыйту çине патшалăх тимлĕрех пăхма, çирĕпрех ыйтма палăртать.

Кашниех хăй туянакан çимĕç пирки тĕплĕн пĕлме тивĕçлĕ. Пĕри ĕне пана сĕте астивесшĕн, тепри типĕ сĕтрен тунипе те çырлахать. Анчах туянаканăн çакна пĕлмелле, суйласа илме пултармалла. Хакне кура, паллах. Ĕне пана сĕте малашне «Сĕт» тесе сутаççĕ, типĕтнĕ çăнăхран тунине «Сĕт напитокĕ» тесе палăртаççĕ.

Паян апат-çимĕçе тĕрлĕ майпа туса илме пулать. Тĕрлĕ витаминсемсĕр ӳстерни тутлăрах та усăллăрах. Анчах вăл хаклăрах пулать. Тĕрлĕ удобренисемпе, çĕнĕ технологисемпе туса илни вара урăхларах. Вăл вара йӳнĕрех те çителĕклĕрех. Анчах çакна туянаканăн пĕлмелле, суйласа илме пултармалла.

Ял çыннин кун пек чухне килти хушма хуçалăх çине шанмалла пулĕ. Килте туни тутлăрах та усăллăрах. Укça та тӳлемелле мар. Паллах, ĕçлемесĕр пулмасть. Сăмах хамăр сывлăх пирки пынă чухне ӳркенмелле мар пулĕ.

**Кану кунĕсем кĕтеççĕ**

## Уяв çине уяв

Раççей кунне паллă тунă май çитес эрнере 4 кун канмалла пулать. Кун пирки вiçĕм кун Ĕç тата ĕçпе тивĕçтерекен федераллă службăн управленийĕн ертӳçи Иван Шкловец пĕлтернĕ.

Çапла вара ку эрнере июнĕн 2 – 7-мĕшĕсенче ĕçлемелле. Çав шутра – июнĕн 7-мĕшĕнче – шăмат кун та.

Çитес эрнере пĕтĕмпе те 3 кун ĕçе тухмалла: июнĕн 9 – 11-мĕшĕсенче. Июнĕн 12, 13, 14 тата 15-мĕшĕсенче (кĕçнернирен пуçласа вырсарниччен) канатпăр.

Чăваш Енте пурăнакансене, июнĕн 24-мĕшĕнче (ытлари) Республика кунне уявланă май, тата 3 кунлă кану кĕтет. Пирĕн правительство шăматри, июнĕн 21-мĕшĕнчи, кану кунне тунтие, июнĕн 23-мĕшне, куçарнă. Çапла вара июнĕн 22, 23, 24-мĕшĕсенче (вырсарнирен пуçласа ытлариччен) канмалла пулать.

СБЕРБАНК РОССИИ

Основан в 1841 году

Кредиты для населения

## АВТОПРОБЕГ В МОРГАУШАХ

**Моргауши встречает участников автопробега «Автокредит – не роскошь». Автопробег проводится Чувашским отделением Сбербанка России совместно с ООО «Автолига-21».**

**В рамках автопробега колонна автомобилей PEUGEOT проедет по городам и районам Чувашии, останавливаясь у отделений Сбербанка России, где все желающие смогут поучаствовать в тест-драйвах, получить консультации по вопросам покупки автомобилей по программе автокредитования Сбербанка России и в рамках реализации Государственной программы развития сельского хозяйства на 2008-2012 годы, оформить заявку на получение кредита и покупку автомобилей.**

**11 июня 2008 года в Моргаушах автоколонна остановится у здания Моргаушского отделения Сбербанка России (ул. Ленина, д. 34).**

**Подробности по телефону: (83541) 2-23-46.**

**Телефон горячей линии ООО «Автолига-21»: (8352) 45-99-00.** 2-3.

**Фестиваль**

## Тăван çĕршыва, çĕре, пĕр-пĕрне юратмалла



Çак кунсенче Шупашкарта Халăхсем хушшинчи патриотлăх туйăмне аталантаракан «Атăл чиккинче» 1 фестиваль иртет. Çавна май пирĕн пата кинематографа пулăшакан тата аталантаракан «Синемолайф» фонд президенчĕ, кинофестиваль йĕркелӳ комитечĕн çум-председателĕ О. Урюмцев, Раççей халăх артисчĕсем П. Винник, А. Васильев тата ытисем килсе çитрĕç.

Çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнче, Ачасене хӳтĕлемелли кун, «Атăл чиккинче» 1 кинофестиваль уçăлчĕ. Уявра çĕршыва, çемьене, аннене юратмалли, тăнăçлăх пирки нумай калаçрĕç. ЧР Президенчĕ Н. Федоров та патриотлăх туйăмне аталантаракан фестиваль вăрçă-харçă пирки мар, юрату пирки пулнине аса илчĕ. «Пирĕн асатте-асаннесем, аттеаннесем çапăçу хирĕнче пире телейлĕ тата тивĕçлĕ пурнăç кӳрессишĕн пуç хунă. Тăван çĕршыва, çĕре, пĕр-пĕрне юратмалла. Кунти фильмсем юрату çинчен, юратушăн», - терĕ Николай Васильевич. «Çĕнĕ кинопроект тĕллевĕ – историпе кăсăкланакансене хавхалантарасси, кăмăл-сипете пуянлатасси, Шупашкар вара тĕрлĕ çĕршыв кинематографисчĕсене пĕр-пĕрин пултарулăхĕпе паллашма май паракан творчество лапамĕ пулĕ», - палăртрĕ президент. Фестивале парне те пачĕ – 1 миллион тенкĕ. Жюри унпа хăй пĕлнĕ пек усă курĕ.

Кинофестиваль 5 кун ĕçлет, ыран вăл хупăнать.

**Сăн ӳкерчĕкре: Раççей халăх артисчĕ А. Васильев кино юратакансемпе.**

**«Çĕнтерӳ ялавне» малалла çырăнтараççĕ**

**Район хаçатне 2008 çулхи иккĕмĕш çур çулта илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Ултă уйăха çырăнса илмелли çĕнĕ хак - 181 тенкĕ те 80 пус. Малтанхипе танлаштарсан, райхаçата ултă уйăха çырăнса илмелли хак 12 тенкĕ те 18 пус çеç ӳсрĕ.**